Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII
ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMIX

*76-77(7818-7819) № №* ✻ *Юн кун, 2010 çулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 15-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*

Çĕр ĕçченĕ «иккĕмĕш çăкăр» пуссинче

## Техника пулăшăвĕ малти вырăнта

Районти ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче паян пĕтĕм ĕç вăйне «иккĕмĕш çăкăр» кăларса пухса кĕртес ĕçе явăçтараççĕ. Шăрăх кунсем çĕр улми тухăçĕ çине те витĕм кӳчĕç пулин те, мĕн лартса ӳстерни – пирĕн! Çак йыхрав-чĕнӳпе хуçалăх ĕçченĕсем кулленех çĕр улми пуссине тухаççĕ. Нумай çĕрте алă ĕçне техника пулăшăвĕпе ылмаштарни хресчен ĕçне çăмăллатни патне илсе пырать.

– Çĕнĕ технологисем тетпĕр те пурнăçран юлма юрамасть. Хуçалăх ертӳçисем çĕнĕлĕхсемпе тан пыни пире те тăрăшуллăрах ĕçлеме хистет. Çапла тăватпăр та, – терĕç çĕр улми кăлармалли комбайнпа касăсем вĕçне тухнă май чарăнсан ирттернĕ калаçура В. Карповпа С. Тимофеев механизаторсем.



«Герой» хуçалăх ял хуçалăх техникипе малалла пысăк утăм тунине юлашки çулсенче хирте çĕр улми кăлармалли икĕ комбайна ĕçлеттернипе те палăртма пулать.

Иккĕ терĕмĕр те, çĕр улми кăлармалли тепĕр комбайнпа В. Бурцевпа В. Семенов механизаторсен тракторĕсем ĕçлеççĕ.

Паянхи сăн ӳкерчĕкре эсир çав комбайнсем çинче ĕçлекенсене куратăр. Сулахайран сылтăмалла: **Людмила Даниленко, Лира Бурцева, Володя Бурцев механизатор, Ольга Медова, Аня Федорова.** Хастар ĕçченсем иртен пуçласа хĕвел аниччен тенĕ пекех ĕçре.

**(Малалли 3-мĕш стр.).**

Ял пурнăçĕ тата хаксем

## Çăкăр йӳнелчĕ, сĕт хакланчĕ

Чăваш Республикин Президенчĕ М. Игнатьев хăй ĕçĕнче ял хуçалăх таварĕсемпе халăха кирлĕ пирвайхи продуктсен хакне ирĕке ярас маррине тĕп вырăнта тытать. Президента ларас умĕнхи тапхăрта Михаил Васильевич ку ыйтусемпе республикăри кашни районтах çивĕч тĕл пулусем ирттерчĕ. Çăкăр мĕншĕн хаклă, сĕте халăхран мĕншĕн йӳнĕ хакпа пуçтараççĕ, продукци тирпейлекенсем мĕне пăхса хак тăваççĕ тата ытти ыйтусем те ун чухне кун йĕркинчен тухмарĕç. Тĕл пулусенче вăл ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен ĕç мелĕсене ӳстермелли пирки, вĕсен пуçаруллăрах пулмалли çинчен калаçрĕ. Ку сăмахсем паян та вăйне çухатман-ха. Вĕсем ĕнерхиллех малти вырăнта тăни республикăмăр пурнăçĕнчен аван курăнать.



Юлашки уйăхра ял çынни çăкăр йӳнелнине тата сĕт хакланнине ырларĕ кăна. Çакна вĕсем çĕнĕ Президент ĕçĕ-хĕлĕпе те çыхăнтараççĕ. «Шăрăх çанталăкпа» сăлтавласа уйăх каялла çăкăр хакĕсем 16 тенкĕрен те иртсе кайнăччĕ. Ял çынни ирсерен патшалăха паракан сĕтĕн хакĕ 11 тенкĕ таврашĕнчеччĕ. Çак хаксем ял çыннине тивĕçтерменни ялсенче ĕнесен кĕтĕвĕсем «шĕвелсе» кайнинченех палăрчĕ. Ĕне сутас е ăна аша парас текенсем черете тăма пуçланăччĕ. Паян мĕн куратпăр-ха? Патшалăх выльăх апачĕ хатĕрлеме пулăшнăран пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче выльăх кĕтĕвне сыхласа хăварасси пирки калаçма, куллен йӳнелнĕ çăкăр туянакан ял çынни те ытларах сĕт сутма пуçларĕ.

Çĕнĕ хаксем вара çапларах: районăн пур кĕтесĕнче тенĕ пекех сĕт пуçтаракансем ăна пĕр килограмшăн 13 тенкĕ параççĕ. Çав вăхăтрах магазинсенчи çăкăр хакĕ 16 тенкĕрен 14 тенкĕ те 60 пуса юлчĕ.

Эсир **пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре** сĕт пуçтаракан предпринимателе В. Колесникова сĕтпе тулнă бидонсемпе куратăр.

– Çиччĕмĕш çул эпир çак ĕçре. Паян районти 10 ялтан кунсерен 3800-3900 кг сĕт пуçтаратпăр. Пире çак ĕçре Кӳстерекри Л. Димитриева, Шурчари З. Борзаева, Çĕньял Шурчари В. Леонтьева, Кашмашри З. Архиповапа В. Охотникова пысăк пулăшу параççĕ. Вĕсем епле ĕçленине кура ял çыннисенчен сĕт пуçтарасси йĕркеленсе пырать, – терĕ Вениамин Порфирьевич черетлĕ тулли сĕт бидонне хупса.



– Ял çыннисене пысăк тав. Уйрăмах нумай сĕт паракансене паян ятранах палăртас килет. Вĕсем: Ю. Пугачева, А. Александрова, Н. Чаплина, Е. Замятина, Е. Савельева, Л. Щукина т. ыт. те, – терĕ хăй куллен 300-350 кг сĕт пуçтарнине палăртса Кашмашри Валентина Охотникова **(2-мĕш сăн ӳкерчĕкре)**.

...Сĕтпе тулнă автомашина ялтан тухса кайрĕ. 15 кунта пĕрре сĕт укçи илекенсем те тулли кăмăлпа килĕсене саланчĕç.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Райадминистрацире

## Пысăк тӳпе хывнăшăн

Муркаш районĕн экономикипе социаллă пурнăçне аталантарма пысăк тӳпе хывнăшăн тата обществăлла ĕçсене активлă хутшăннăшăн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи сентябрĕн 9-мĕшĕнчи 691 № йышăнăвĕпе Муркаш районĕн хисеплĕ гражданинне **Крета Лазаревна ВАЛИЦКАЯНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Актуаллă

## Çамрăка ял илĕртмест-им?

Паян районти ял хуçалăх предприятийĕсенче вăтăр çул тултарман 113 çамрăк ĕçлет. Çакă ял хуçалăхĕнче вăй хуракан мĕн пур çынсен 7 проценчĕ çеç пулать. «Ударник» хуçалăхра 18 çамрăк, Муркашри сĕт заводĕнче – 11, Муркашри чăх-чĕп фабрикинче – 10.

Кăçал Чăваш ял хуçалăх академийĕнчен районтан вĕренме янă 11 çамрăк вĕренсе тухнă. Вĕсенчен 3-шĕ çеç района таврăннă.

Паян районти ял хуçалăх предприятийĕсенче квалификациллĕ кадрсем çитмеççĕ. Вĕренсе тухакан яшсемпе хĕрсем те яла килесшĕнех мар. Çав хушăрах çамрăксене яла илсе килессипе тĕрлĕ программăсем ĕçлеççĕ. Апла пулсан туса çитерменни куç кĕретех. Çамрăксене тата тăван ял мĕншĕн илĕртмест-ши?!

Кĕскен

## Мĕн чухлĕ ĕçлесе илетпĕр?

Районти пĕчĕк предпринимательство субъекчĕсем шутланман организацисенче уйăхри вăтам ĕç укçи шайĕ 9416,4 тенкĕпе танлашать. 2009 çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан вăл 112,6 процент пулать. Вĕсенче 5481 çын (иртнĕ çулхин 94,6 проценчĕ е 313 çын сахалрах) вăй хурать.

2010 çулхи январь–июль уйăхĕсенче Чăваш Республикипе шутласа панă уйăхри вăтам ĕç укçи 12279,4 тенкĕпе танлашнă, иртнĕ çулхи шайран 9,7 процент ӳснĕ. Районĕпе уйăхри вăтам ĕç укçи виçи республикăри кăтартăвăн 76,7 проценчĕ чухлĕ.

## «2010 çулхи кĕр парнисем»

уйăхлăх йĕркеленĕ май Шупашкар тата Çĕнĕ Шупашкар хулисенче пурăнакансене пахалăхлă ял хуçалăх продукцийĕпе тивĕçтерес тĕллевпе иртнĕ шăмат кунпа вырсарни кун «канмалли кунсен» ярмăркки тата суту-илӳ площадкисем ĕçлеме тытăннă. Хула çыннисене хăйсен продукцине сĕнекенсене автомашинăсем çинчен тĕрĕслевпе касса машинисемсĕрех сутма ирĕк панă, суту-илӳ вырăнĕшĕн те укçа ыйтмаççĕ. Пирĕн районтан унта «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики, Мăн Сĕнтĕр райповĕ, фермер тата уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсем активлă хутшăннă, хула çыннисене çĕр улми, купăста, кишĕр, сухан, кăшман, чăх-чĕп продукцийĕ сĕннĕ.

Çывăх вăхăтрах хăйсен продукцийĕпе ытти организацисем те хулана тухма палăртаççĕ.

## Учительсем квалификацие ӳстереççĕ

2010 çулта РФ «Вĕренӳ çинчен» Саккунĕпе тата патшалăхпа муниципаллă вĕрентӳ учрежденийĕсен педагогика ĕçченĕсемпе ертӳçисен аттестацине ирттерессин положенийĕпе килĕшӳллĕн аттестаци комиссине 204 заявлени панă. Ку вăл 2009 çулхинчен икĕ хута яхăн нумайрах. Вăл шутран 27-ĕн чи аслă категорие, 141 çын пĕрремĕш категорие, 36-ăн иккĕмĕш категорие илессипе аттестацие хутшăнĕç.

## Библиотекăсенче – çĕнĕ учебниксем

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă чухне район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайне ЧР Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерствинчен 65573 тенкĕлĕх учебниксем тӳлевсĕр килсе çитнĕ. Вĕсен шутĕнче 3-мĕш класра вуламалли «Ылтăн пучах» тата 7-мĕшпе 11-мĕш классен чăваш литератури.

«Чувашсетьгаз» акционерсен уçă обществин «Моргаушимежрайгаз» филиалĕ 2010 çулхи сентябрĕн 9-мĕшĕнче пуçламăш классем валли 3375 тенкĕлĕх «Секреты природного газа» кĕнекесем парнеленĕ.

**Хамăр инф.**

# Пĕтĕмпех пенси пирки

## Раççей Пенси фончĕн районти управленийĕн ятарлă кăларăмĕ

## Хăвăн пенси виçи хăвăнтан килет

*Паянхи калаçу – патшалăх граждансене хăйсем хутшăннипе тата патшалăх енчен пулăшнипе пулас пенси виçисене ӳстерме майсем туса пани пирки. Район хаçачĕн сотрудникĕн ыйтăвĕсем çине вара Раççей Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ Надежда Геннадьевна СЕМЕНОВА хуравлама кăмăл турĕ.*

**– Надежда Геннадьевна, калаçăва çакăнтан пуçлар пулĕ. Сентябрь уйăхĕнчен тытăнса республикăри «Хăвăн пулас пенси хăвăнтан килет» вĕрентӳ акцийĕн иккĕмĕш тапхăрĕ вăй илчĕ...**

– Асăннă акци çулталăк пуçламăшĕнчех пуçăннăччĕ. «Вĕрентӳ программине» РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи управленийĕ туса хатĕрленĕ. Вăл икĕ проектран тăрать.

«Уçă урок» проектăн тĕп тĕллевĕ – вĕренекен çамрăксене пулас пенси виçине ӳстерме майсем пурри пирки ăнлантарса парасси. Çавна май шкулсенче, колледжсенче, профессипе техника училищисенче, аслă вĕренӳ заведенийĕсенче вĕсемпе уçă уроксем, право сехечĕсем, ыйтса пĕлнисем тата ытти ăнлантару ĕçĕсем туса ирттерме пăхнă.

«Производство практики» проект вара – ĕç паракансемпе ĕçлекенсем валли. Вăл патшалăх пулас пенсисене хушса финанслассин тата пухăнакан пенсисене инвестицилессин Программипе килĕшӳллĕн хушма страховани взносĕсем тӳлессипе семинарсем, уçă алăксен кунĕсем, предпринимательсемпе тĕл пулусем, практикумсем ирттерессипе çыхăннă.

**– Ку акцин тĕллевĕ мĕнре-ха?**

– Унăн тĕллевĕ – харпăр хăйĕн пулас пенси виçине ӳстермелли майсем пирки ăнлантарса парасси. Çавна валли пухăнакан пенси взносĕсен суммисене ертсе пыракан компанисемпе патшалăхăн шутланман пенси фончĕсене тĕрĕс вырнаçтарса усă курма пĕлмелле. Кунсăр пуçне кашниех хăйĕн пулас пенсине ӳстерме ирĕклĕ майпа взноссем куçарма пултарать. Çапла вара вăл патшалăх пенсисене хушса финанслассин программин участникĕ пулса тăрать.

**– Асăннă программа пирки кăштах та пулин тĕплĕнрех асăнса хăварма май çук-ши?**

– Патшалăх пенсисене хушса финанслассин программи ансат. Унта хутшăнас текенĕн çулталăкне 2 пин тенкĕрен тытăнса 12 пин тенкĕ таран взнос тӳлес пулать. Патшалăх вара çав суммăна икĕ хут пысăклатса парать. Ку взноссене пĕр хут та е уйăхсерен те тӳлесе тăма пулать. Кунпа пĕрлех ăна ĕç вырăнĕнче е кирек епле банкра та тӳлеме май пур.

**– Çавна та пĕлес килет. Предприяти е организаци хăйĕн ирĕкĕпе тата хăйĕн шучĕпе ĕçлекенсемшĕн взноссем куçарма пултарать-и?**

– Çапла, кун пек май та туса панă. Уйрăм предприяти хăйĕн ирĕкĕпе те предприятире ĕçлекенсемшĕн патшалăх пулас пенсисене финанслассин программипе килĕшӳллĕн укçа куçарса пама пултарать. Çакă администраци коллектив членĕсен малашлăхĕшĕн тăрăшни çинчен кăна калать.

**– Республика шайĕнче тата районта асăннă программа епле пурнăçланса пырать?**

– Программăна хутшăнса иртнĕ çул республикипе хăйсен пулас пенси виçине ӳстерме шутлисем пĕтĕмпе 30 миллион тенкĕ тӳленĕ. Районĕпе ку сумма 600 пин тенкĕ ытла. Вĕсене пурне те патшалăх хушма финанслани шучĕпе çавăн чухлĕ укçа куçарса панă, хăйĕн çине илнĕ обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçланă.

**– Кăсăклă тепĕр ыйту та çуралать. Енчен те пулас пенсие патшалăх хушса финанслассин программине хутшăнакан çын пенсие тухиччене пурăнаймарĕ пулсан пухăннă ку сумма ăçта каять?**

– Раççей Правительстви йышăннă правилăсемпе килĕшӳллĕн вилнĕ çыннăн хăйĕн взносĕсене те, патшалăх хушса тӳленĕ укçа-тенкĕне те унăн тăванĕсене пама тивĕç.

Кунта пухăнакан пенсие тăванĕсене тӳлессипе çыхăннă тепĕр улшăну пирки те асăнса хăварни вырăнлă пулĕ. Хăшĕсем ача амăшĕн капиталĕн суммине амăшĕн пухăнакан пенсийĕ валли куçарнă. Амăшĕ вилес пулсан кун пек чухне ача амăшĕн капиталне тăванĕсене тӳлемеççĕ. Ку суммăна ашшĕ е ачисем илме тивĕç. Вĕсем вара унпа хăйсем пĕлнĕ пек е çуртйĕр условийĕсене лайăхлатма, е ачисене вĕрентме усă курĕç.

Пухăнакан пенсисене вилнĕ çынсен тăванĕсене 2008 çулта тӳлеме тытăннă. Районта та ăна илнисем сахал мар. Унăн сумми çын миçе çулта пулнинчен, унăн ĕç укçи виçинчен, патшалăх пенсисене финанслассин программипе взноссем мĕн чухлĕ куçарнинчен, пухăнакан пенсисене инвестициленин тупăшĕнчен килет.

Пухăнакан пенсисене вилнĕ çыннăн тăванĕсене çын 2002 çулта е хыççăнхи çулсенче вилнĕ пулсан, унччен ĕç пенсийĕн пухăнакан пайне тӳлеме тытăнман пулсан параççĕ.

**– Вилнĕ çыннăн ĕç пенсийĕн пухăнакан пайне унăн тăванĕсене пурне те пама пултараççĕ-и?**

– Кунта пĕрремĕш шайри тата иккĕмĕш шайри еткерсене палăртса хăвармалла. Пĕрремĕш шайрисем шутне вилнĕ çыннăн ачисем, мăшăрĕ, ашшĕ-амăшĕ, иккĕмĕш шайрисем шутне пиччĕшаппăшĕсемпе шăллĕ-йăмăкĕсем, аслашшĕсемпе асламăшĕсем, мăнукĕсем кĕреççĕ.

**– Тивĕçекен ку суммăна илес тесен мĕн тумаллаха?**

– Вилнĕ çыннăн пухăнакан пенси суммине илес тесен тăванĕсен РФ Пенси фончĕн управленине е патшалăхăн шутланман пенси фондне (енчен те вилнĕ çыннăн укçи-тенки ку фондра пулсан) пырса çын вилнĕренпе 6 уйăх иртиччен заявлени çырса памалла. Енчен те ку вăхăт иртсе кайнă пулсан вара ыйтăва суд урлă таткса пама тивет.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

## Эсир пĕлесшĕнччĕ



***– Çынсем хăйсен пенси виçисене ӳстерессине патшалăх финанслассин программине хутшăнакансем взноссене банка пымасăр та куçарса пама пултарасси пирки илтнĕччĕ.***

– Çапла, кун пек май пур. Халĕ взноссене Перекет банкĕн кирек хăш терминалĕнче те куçарма пулать. Çавна валли пурăнакан вырăнти Пенси фондĕнче штрих-кодлă ятран паракан квитанцие илмелле кăна.

Терминал штрих-кода «вуласа» взнос тӳлекен пирки информацие уçăмлатать, ун хыççăн взнос тӳлесе чек илмелле кăна. Укçа çийĕнчех тӳлекенĕн пенсийĕн пухăнакан пайĕ çине куçать. Кашни хутĕнчех кирек епле сумма та куçарма пулать. Усă курасса вара ятран паракан унченхи квитанципех усă курмалла.

***– Хăйĕн пенси виçине патшалăх пулăшнипе ӳстерес шухăшлă çыннăн çулталăкне мĕн чухлĕ взнос тӳлемелле?***

– Патшалăх ку тĕллевпе çулталăк хушшинче 2 пин тенкĕрен тытăнса 12 пин тенкĕ таран взнос тӳленисен укçа суммисене çавăн чухлех хушса финанслать. Çапла вара гражданинăн хăй куçарнă укçа сумми икĕ хут пысăкланать.

***– Перекет банкĕн терминалĕсем банксенче кăна-и?***

– Терминалсем – тӳлевсем тумалли хальхи вăхăтри чи лайăх мел. Вĕсем республикипех пур. Вăл шутра суту-илӳ предприятийĕсенче, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх организацийĕсенче, предприятисенче. Ку пĕр енчен вăхăта чылай перекетлеме май парать, тепĕр енчен тӳленĕ чухне йăнăш пулассинчен сыхланма пулăшать.

***– Патшалăх пулăшнипе хăйсен пенси виçисене ӳстерес текенсем нумай-и?***

– Муркаш районĕпе илес пулсан асăннă программăна хутшăнма 616 çын кăмăл тунă. Вĕсенчен 140-шĕ ытла взноссене куçараççĕ. Республикипе 75 пин çын патшалăх пенси виçисене ӳстерме куçаракан взноссене финанслассин мелĕпе усă курать. Раççейĕпе кун пеккисен шучĕ 3 миллиона çитнĕ. Çулталăк пуçланнăранпа вĕсен счечĕсем çине патшалăх тивĕçекен пĕтĕм суммăна куçарса панă.

**Ыйтусене пай пуçлăхĕ О. АЛЕКСЕЕВА хуравланă.**

## Пултаруллă коллектив вăй хурать



**РФ Пенси фончĕн Е.М. Александрова (малти ретре сылтăмран виççĕмĕшĕ) ертсе пыракан районти управленийĕн туслă коллективĕ республика шайĕнче те ырă ятлисен шутĕнче.**

## Цифрăсем кăна

*Районĕпе çак вăхăта 10 пин пенсионера яхăн шутланать.*

*Вăл шутран ватлăха пула пенси илсе тăракансем 8143 çын, 589 çын инвалидноçа пула, 351 çын çемьере тăрантаракана çухатнипе пенси илсе тăрать.*

*Федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансем 3076 çын.*

*Социаллă пенси илсе тăракансем 823 çын.*

*Пенси илсе тăракан 834 çынна федераллă социаллă хушма тӳлевсемпе тивĕçтернĕ.*

*Пенсин чи пĕчĕк виçи 3910 тенкĕпе танлашать. Районĕпе сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пенсисен вăтам виçи 6211 тенкĕ те 47 пус пулнă.*

## Вырăна тухса йышăнĕç

***Кăçал Раççей Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи служби хăйĕн 20 çулхи юбилейне паллă тăвать. Çавна май асăннă служба ял çыннисемпе тĕл пулма, вĕсене хăйсене интереслентерекен ыйтусемпе йышăнма сентябрь уйăхĕнче вырăнсене тухса çӳрессине йĕркелет.***

Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи службин специалисчĕсем **Муркаш районĕнче сентябрĕн 22-мĕшĕнче** пулма палăртаççĕ. Çав кун вĕсем Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи Сарчак, Юнкă ял тăрăхĕнчи Канаш выççăлккине çитеççĕ. Çавна валли ятарлă икĕ микроавтобус уйăрнă. Ĕç вырăнĕсене компьютер техникипе – ноутбуксемпе тата нумай функциллĕ устройствăсемпе (принтер, сканер, копир) тивĕçтернĕ. Интернета тухма та май пур. Çакă вара Пенси фончĕн даннăйĕсен электронлă базипе çыхăнма май парать.

Чăваш Республикинче клиентсен куçса çӳрекен асăннă службине 2009 çулта йĕркеленĕ. Çак вăхăтчен вырăна 1217 хутчен тухса çӳренĕ, республикăри 11 пин ытла çынна йышăннă.

Вырăнсене тухмалли графиксем пирки массăллă информаци хатĕрĕсем урлă хыпарлаççĕ, вырăнти администрацисен сайчĕсенче, консультаци пункчĕсенче вырнаçтараççĕ, ветерансемпе инвалидсен обществăлла организацийĕсене пĕлтереççĕ, пĕлтерӳсене почта уйрăмĕсенче, магазинсенче тата ытти вырăнсенче çакаççĕ. Оперативлă лини телефонĕ урлă Пенси фончĕн хуласенчи тата районсенчи управленийĕсем инвалидсене, ватă çынсене, пĕчĕк ачаллă хĕрарăмсене хăйсем пурăнакан вырăнсенче йышăнма заявкăсем пухаççĕ, кайран вара асăннă адрессемпе çула тухаççĕ.

Çынсемпе ĕçлемелли çĕнĕ формăсемпе усă курма тытăнни вĕсене консультаци услугисем парассине лайăхлатма, пенсисемпе тивĕçтерес тата страховани тĕлĕшпе граждансен прависене вăхăтра пурнăçлама майсем туса парать. Çавăн пекех ку вăл пенси ыйтăвĕсемпе пурнăça кĕрекен çĕнĕлĕхсем пирки вăхăтра пĕлтерсе тăрас тĕлĕшпе те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

**Кăларăма В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

Çĕр ĕçченĕ «иккĕмĕш çăкăр» пуссинче

# Техника пулăшăвĕ малти вырăнта

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

## Хирте тăрăшуллă пулчĕç

Кĕр кунĕсем – çĕр ĕçченĕн çулталăкри тăрăшулăх кăшăлĕ. Çу каçа кам епле вăй хунă – хĕл кунĕсем те уншăн çавăн пек тутă пулĕç. Ял ачисем çак чăнлăха ачаран чуна хывса ӳсеççĕ те кĕр çитсен канмалли кунсенче е вĕренӳре пĕчĕк тăхтав туса тăван хуçалăха, ашшĕ-амăшне кĕрхи ĕçсенче пулăшаççĕ. Çак тăрăшулăхпа воспитани процесĕ тачă çыхăнура: ĕçленине кура кашăкра какай пулать. Ĕçре тăрăшулли вĕренӳре те кайрисен ретĕнче пулманнине пирĕнтен кашниех курса-пĕлсе тăратпăр.

Çĕр улми кăларма вăхăт çитрĕ те шкул ачисем те çак пархатарлă ĕçрен катара юлмарĕç. Акă Çатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта вĕренекенсем сентябрĕн малтанхи кунĕсенчех тăван шкулăн çĕр участокĕнчи пĕр гектара яхăн çĕр улмине алăпах кăларса кĕртрĕç. Ку ĕçре учительсемпе пĕрле 9-10 классенче вĕренекенсем тăрăшулăх кăтартрĕç.

Ю. Герасимов ертсе пыракан Турайри вăтам шкул коллективĕ туслă вăй хурса темиçе кун хушшинчех «ДаАн» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра 30 тоннăна яхăн çĕр улми пуçтарчĕ. Ĕç килĕшĕвĕпе вĕсем хăйсене хĕл каçа апатланма 3 тонна «иккĕмĕш çăкăр» ĕçлесе илчĕç. Кунти ĕçсене А. Миронова йĕркелӳçĕпе шкул директорĕн çумĕ И. Иванова майлаштарса пычĕç. Ачасем те, вĕрентекенсем те ĕçре хастар пулчĕç. Шкул поварĕсем В. Петровăпа Л. Смирнова ачасене куллен вĕри апатпа тивĕçтерни те пĕрлехи ӳсĕмшĕн пысăк тĕкĕ пулчĕ. Шкул ачисем хăйсене ĕçлеме шаннăшăн «ДаАн» общество ертӳçине А. Степанова тав тăваççĕ.

## Арбуз туса илтĕмĕр

Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта хăйсен пахчинче çĕр улмипе тĕрлĕ пахча çимĕç туса илесси – нумай çула тăсăлакан ырă ĕç. Кунта вăй хунипе нумай яш-кĕрĕм çĕр ĕçне юратакан пулса шкул пĕтернĕ, тăван «Свобода» хуçалăх уйхирĕнче ĕçленĕ. Çак юратупах çемьесем çавăрса ачапăча ӳстернĕ.



Кăçалхи шăрăх çанталăкра та Кашмашри шкул ачисем алă усмарĕç. Çур гектар ытла лаптăк çинче çĕр улми туса илчĕç. Çу каçа шăварса-çумласа тăнипе пахчара купăсти те, кишĕрĕ-хăярĕ те, хĕрлĕ кăшманĕ те ăнса пулчĕ. Ку çеç те çителĕксĕр. Биологипе химии учительници Э. Васильева ертсе пынипе шкул ачисем кăçалхи шăрăх çанталăкра шкул пахчинчех арбуз та, дыня та туса илчĕç.

Ĕçрен ан хăра – вăл хăй санран хăратăр. Çак девиз кашни вĕренекеншĕн çывăх та пĕлтерĕшлĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: «Герой» хуçалăхри çĕр улми кăларакан комбайн ĕçре.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Вулакан пултарулăхĕ

# Юрату вутĕнче ман чĕре

**«Çамрăклăх» ярăмран 1980-мĕш çулсем**

Сад пахчи ешĕл тум тăхăнсассăн,
Кĕмĕлне тулли уйăх сапсан
Туйăнать тек мана эс тухассăн
Ĕлĕкхи вырăна каç пулсан.

Таврана шурă юр шуратсассăн,
Çăлтăрсем тӳпере ялкăшсан
Туйăнать тек мана эс тухассăн
Ĕлĕкхи вырăна каç пулсан.

Ак каллех шурă тумлă пахчийĕ,
Тулли уйăх шăвать тӳпере,
Пиçĕ ак панулмийĕ, çырлийĕ,
Сана çеç манаймасть ман чĕре.

Эс çунтартăн, савни, ăшăтмарăн,
Кунран-кун çунтăм эп пурпĕрех.
Кăварланчĕ иккен, эс туймарăн,
Юрату вутĕнче ман чĕре.

**П. ВОРОБЬЕВ.**

Турра ĕненекенсем валли

# Мăнастирпе таса çăл куççем



**(Малалли. Пуçл. иртнĕ номерсенче).**

Пирĕн енри арçынсен Каршлăхри Александр Невский ячĕллĕ чăвашсен мăнастирне çитсе курнă май юнашарах вырнаçнă вăрçăпа ĕç ветеранĕсен интернат-çуртĕнче ĕçлекен Валентина Крючковăпа тĕл пулса калаçма тӳр килчĕ. Каршлăхри кашни утăм асамлăхпа пуян пулнине çак тĕл пулуран та ăнланса илтĕм.

...Паян çынсем шыва кĕрекен вырăнта авалтанпах çăл куç пулнă. Вăл çĕр айĕнчен чулсем витĕр юхса выртнă. Вырăнти пĕр ватă çын каласа панă тăрăх халĕ часавай вырнаçнă вырăнта ĕлĕкрех санатори мунчи пулнă. Унта таса çăл куçри шывпа çеç усă курнă.

2001 çулта мăнастир çĕнĕлле йĕркеленсе кайсан манахсем шыва кĕмелли таса çăл куç уçнă. Ку вăл Турă Амăшĕн таса çăл куçĕ пулнă **(сăн ӳкерчĕкре)**. 2008 çулта манахсем тăрăшнипе-тимленипе иккĕмĕш таса çăл куç уçнă. Ăна Александр Невский ятне панă.

Халĕ кунта кунсерен вуншарçĕршер çын килсе çӳрет. Чул хуларан килнĕ пĕр хĕрарăм каласа панинчен: «Ывăлăм çурăм шăммине питĕ хытă амантсан Çĕнĕ Шупашкарти тăвансем сĕннипе ăна Каршлăха шыва кĕме илсе килтĕмĕр. Мĕн тетĕр эсир? Ывăлăм сывалчĕ. Унтанпа çуллен кунта шыва кĕме тата таса шыв илме килетĕп».

**(Малалли пулать).**

**А. БЕЛОВ.**


# Модем за 1 рубль, Интернет нашей мечты

В этом году Интернету в Чувашии исполняется шестнадцать лет. За минувшее с тех пор время мы привыкли мгновенно узнавать новости, читать письма, отправленные минуту назад из другой страны, общаться по душам с людьми, с которыми никогда не встречались. Ни в одном фантастическом романе не было предугадано главное чудо нашего века: возможность найти что угодно и кого угодно во Всемирной сети.




Сегодня мы стремимся всегда быть на связи. И эта связь становится все более скоростной и мобильной. На смену «черепашьему шагу», с которым загружались еще недавно странички сайтов, пришла «скорость ягуара»: в считанные секунды скачивается музыка, открываются фотографии и видеоролики.

Хороший Интернет – быстрый Интернет, поэтому компания «МегаФон» позаботилась о том, чтобы сделать доступным мир высоких скоростей для всех и каждого. «МегаФон-Модем» – умное устройство, которое подходит абсолютно к любому ноутбуку и компьютеру. Достаточно вставить его в USB-порт – и дальше автоматически устанавливается программа «МегаФон-Интернет». Следуйте ее подсказкам, и она самостоятельно настроит модем и компьютер для работы в Сети.

Вам не придется путаться в проводах и по полдня ждать, когда у провайдера появится Интернет: МегаФон обеспечивает качественное покрытие по всей республике и постоянно отслеживает надежность сети – а значит, нужная страничка сайта всегда загрузится.

**Компания подготовила отличный подарок к новому учебному году: турбоинтернет от «МегаФон-модема» не только сбережет наши время и нервы, но и поможет сэкономить. При подключении трех месяцев безлимитного Интернета модем обойдется нам… всего в** *1 рубль*.* **Теперь скорость до** 3,6 Мбит/сек **стала вполне по карману**.

**Акция** «Модем за 1 рубль» **рассчитана на всех жителей республики. Любителям еще более высоких мощностей предлагается модем со скоростью** до 7,2 Мбит/сек **стоимостью** 399 рублей **плюс** 2 месяца безлимитного Интернета**.**

Высокоскоростной, безлимитный и более чем доступный – это Интернет нашей мечты. Теперь это Интернет от МегаФона.

*Акция «Модем за 1 рубль» действует в период с 07 сентября по 30 сентября 2010г. Указана стоимость 3G-модема при условии подключения к ТПО «МегаФон-Логин Безлимитный Акционный». Количество модемов модели Е1550 ограничено. Лицензия №58056 от 18.04.2000г.


Сăмах – выльăх тухтăрне

# Кĕр мăнтăрĕ. Ĕнесем кӳпĕнеççĕ. Мĕн тумалла?

Вăхăт утти хăйĕннех тăвать. Кун тăршшĕ тăвату сехет ытла кĕскелчĕ. Апла пулин те урамра ăшă çанталăк тăни çу кунĕсем пуçĕпех хыçа юлманни пирки калать. Анчах кĕр сиввисем вăй илсе пыни те, хушăран çумăрсем çуни тата ир-каç тăм ӳкни те вăрттăнлăх мар. Ял хуçалăх предприятийĕсен хирĕсенче кĕрхи ĕçсем вĕçленсе пыраççĕ. Паян нумайăшĕ çĕр улми пуссинче вăй хурать, маларах ĕçсенчен пушаннисем тăрăшсах кĕрхи çĕртме тăваççĕ. Хирсем пушаннă май çĕр ĕçченĕ хаш сывлать, хăйне канлĕрех туйма пуçлать. Умри ĕçĕсене вăхăтра пурнăçланă ĕçченшĕн ку лайăх та. Тĕрĕссипе çапла пулмалла та. Анчах канлĕх туйăмĕпе хавхаланса тимлĕхе çухатни кĕр мăнтăрĕпе питех те хакла ларма пултарать. Сăмах кунта хирсем ирĕкленнипе тимлĕхе çухатнă кĕтӳçсем ĕнесене клевер-люцерна çине кĕртсе ярса кӳпĕнтерсе яни пирки. Кун пек тĕслĕхсем районта çулленех пулнине шута илсе асăрхаттару кирлех тесе шутлатăп. Вăл ытлашши пулмĕ.

2010 çул пуçланнă тĕле районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче мăйракаллă шултра выльăхсем пурĕ 5248 пуç (çулталăк маларах – 5479 пуç) пулнăччĕ. Вĕсенчен 2100 пуçĕ (пĕлтĕр 2180-ччĕ) – ĕнесем. Кун çумне уйрăм çынсен харпăрлăхĕнчи выльăхсене хушар: мăйракаллă шултра выльăхсем 10991 пуç (çулталăк маларах 12169 пуçчĕ). Вăл шутран 7369 пуçĕ (7757 пуçчĕ) ĕнесем. Кăçалхи типĕ те шăрăх çанталăка пула çу каçа çак йыш та чылай каталчĕ. Çапах мĕн пуррине сыхласа хăварни малашлăхри тăпăш пирки шухăшлаттарать. Çавăнпа та кĕр мăнтăрĕпе туллин савăнма ку таранччен ӳстернĕ выльăха тĕрĕс-тĕкел пăхса хĕле кĕртесси, унран ытларах тупăш илесси – выльăх-чĕрлĕх пăхакансем умĕнче тăракан паянхи тĕллев.

Выльăх пăхакансем умĕнче тăракан паянхи тĕп хăрушлăх вăл – ĕнесем кӳпĕнсе кайса вилме пултарни. Малаллахи сăмах çакăн çинчен пулнăран асăннă инкекрен сентябрь-октябрьте уйрăмах асăрханма кирли çинчен пĕлтерес тетĕп. Çулталăк каялла çак вăхăтра пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче ĕнесем кӳпĕннĕ тĕслĕхсем пĕрре-иккĕ мар пулчĕç. Çавна пула ĕнесене вăхăтсăр пусса е вĕлерсе ярса çухатусем тӳсме тиврĕ. Çакă малашлăха пăхакан çĕр ĕçченĕшĕн курăмлă кăлтăк.

Урамра авăн уйăхĕн илемлĕ кунĕсем. Çĕр ĕçченĕ вырма ĕçĕсене вĕçленĕ май хирте кĕрхи культурăсен калчипе клевер-люцерна кайăвĕ çеç ешерсе ларать. Çакна шута илсе зоотехник-ветеринарсемпе выльăх пăхакансен асăрханулăха кашнин ӳстермелле. Ку вăхăтра фермăсенче те, уйрăм çынсен те ĕнесене ирпе-каçпа типĕ утă-улăм çителĕклĕ пама тăрăшмалла. Кĕтӳçсен вара ĕне кĕтĕвне клевер-люцерна анисем çине ирхи сывлăмпа тата çумăрлă çанталăкра пачах кĕртме юрамасть. Çав анасем çине кĕске самантлăха кĕртсе кăларнă хыççăн та ĕнесене шăварассинчен асăрханмалла. Тăм ӳксессĕн те вăл пусăсенче çӳреме кĕтӳçсен асăрханулăхĕ çӳллĕ шайра пулмалла. Çав вăхăтрах выльăх кăшманĕн çулçине çини ĕнесене кӳпĕнтермест тата ĕнесене ир-каç кăштах çăнăх пани те инкек патне илсе пымасть.

Кăçал кĕр кунĕсем çитнĕ-çитмен ялсенче ĕнесем кӳпĕнсе кайнă тĕслĕхсем пулчĕç. Пулăшу вăхăтлă пулнăран пĕр ĕнене те вĕлермен.

Ĕне кӳпĕнсех кайрĕ пулсан ăна пирвайхи пулăшу пама пĕлни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çакна валли пĕрлешӳллĕ хуçалăх ертӳçисемпе зооветспециалистсен, ял старостисен кĕтӳçсене ветсумкăсемпе тивĕçтермелле. Унта обязательнăй йĕркепе сĕт кислоти, çунтарнă магнези, тимпанол, мăн хырăма шăтарса сывлăш кăлармалли трокар пулмалла. Çак хатĕрсем килти хушма хуçалăхсенче пулни те кирлĕ вăхăтра ытлашши пулмĕ.

Мĕн тумалла-ха ĕне кӳпĕнсе кайрĕ пулсан? Инкек тӳсекен выльăха малтанах 10 – 15 грамм сĕт кислоти, 160 – 200 грамм тимпанол, 20 грамм çунтарнă магнези памалла. Каламалла, çунтарнă магнезипе сĕт кислотине çур литр шыва ярса ирĕлтермелле. Тимпанол – усă курма хатĕр препарат. Вĕсем пулмасан ĕнене 2 – 3 литр тин кăна сунă сĕт памалла та кӳпĕннĕ вырăна сивĕ шыв ярса тăмалла.

Кӳпĕннĕ ĕнене пирвайхи пулăшу панă вăхăтра е ун хыççăнах обязательнăй йĕркепе выльăх тухтăрне чĕнмелле.

**А. ФЕДОРОВА,**
**выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцин ветврачĕ.**

Килти хушма хуçалăх

# Марганцовка пулăшрĕ

**Кĕр çитрĕ. Кĕçех çимĕçсене упрама нӳхрепе хурăпăр, анчах нӳхреп маччи кăмпаланнинчен мĕнле хăтăлмалла-ши?**

**А. МЕФОДЬЕВ.**

Хам пурнăçра нӳхрепри кăвакăша (грибки) пĕтерме анлă усă курнă меле сĕнетĕп. Шывра марганцовка ирĕлтермелле (çăрарах пултăр) те унпа нӳхрепе кĕр çитиччен «шуратмалла». Пĕрремĕш çулĕнче 2-3 шуратни те ытлашши пулмасть. Хыççăнхи çулсенче çулталăкра пĕрре шуратмалла.

**А. СЕМЕНОВ, пахчаçă.**

Хаçатра çырнă хыççăн

# Ĕçлемесĕр пурăнма май çук

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» райхаçатра пичетленнĕ «Кун пек те юрать-ши?» О. Тарасовăн статйине вуланă хыççăн хирĕçле çырмасăр чăтаймарăм. Çавăнта хускатнă ыйтусемпе пĕрре те килĕшес килмерĕ манăн.**

Коммунизм вăхăтне аса илет-ха автор. Ун чухне çынсене «бесплат» ĕçлеттермен. Укçине те вăхăтра тӳленĕ, тырри-пулли те аванах пулнă, пурте çитнĕ. Кам пĕлнĕ-ха çакăн пек йывăр лару-тăру пулса тухасса?

Шкул ачисем ял хуçалăхне кăшт пулăшмасан тата мĕнле-ха? Эпир ялта пурăнатпăр, атте-анне те ялта ӳснĕ. Хамăрăн ачасене те пирĕн ĕçе юратма вĕрентес пулать. «Хула ачисем ни кĕркунне, ни çуркунне, ни çулла ĕçлемеççĕ», – тет автор. Мĕнле çынсем пулса ӳсеççĕ вара вĕсем?! Пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтараймасан кайран, ӳссе çитсен, ĕçлеттерейместĕн. «Ĕçле, ĕçле, ĕçле – çи, ĕçлемесен ан та çи», – тенĕ ĕлĕкех ваттисем. Ĕçпе пиçĕхсе çитĕннĕ çынран çеç лайăх этем пулать.

Эпĕ хам та шкулта техслужащи пулса ĕçлетĕп. Шкул ачисемпе пĕрле çĕр улми пуссинче те тăрăшнă, вĕсемпе ăмăртса ĕçленĕ. Алеша ывăлăм та манпа пĕрлех тăрăшрĕ. Пиллĕкмĕш класра çеç вĕренет пулин те манран пĕрре те кая юлмарĕ. Ачасем ĕçленине курса чун савăнса тăчĕ. Маттур ачасем çитĕнеççĕ пирĕн тăрăхра!

Вĕрентекенсене те хурлас килмест манăн. Ачасемпе пĕрле вĕсем те тăрăшсах ĕçлерĕç. Атапай шкулĕн вĕрентекенĕсем ачасем мĕнле ĕçленине айккинчен пăхса тăмарĕç (хăшĕпĕрисем пек!), иккĕмĕш çăкăра пухса кĕртме пулăшрĕç.

Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче шкулта ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕ иртрĕ. Ачасене вĕри апат çитерес ыйтăва та хускатрĕç унта. Вара ашшĕ-амăшĕсен килĕшĕвĕпе шкул ачисене çĕр улми пуçтарнă çĕре явăçтарма юрать тесе йышăнтăмăр. Ачасене вĕри апат çитермесĕр усрама çук вĕт-ха. Çĕр улмине килтен парса ярас, кăçалхи çул килте те вăрлăх валли çеç пулчĕ. Мĕн тумалла? Çавăнпа та шкул ачисем хăйсене çимелĕх çĕр улми туса илнине ырламалла çеç. «Оринино» хуçалăхне пирĕн Атапай ачисене «иккĕмĕш çăкăра» пухса кĕртме чĕннĕшĕн тав сăмахĕ çеç калас килет.

Ĕçре маттурри вĕренӳре те малтах пырать вăл. Атапай шкулĕн вĕрентӳ процесĕн кăтартăвĕсене илес пулсан вĕсем ытти шкулсен кăтартăвĕсенчен пĕрре те япăх мар. Олимпиадăсемпе конкурссене те хутшăнаççĕ ачасем. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче акă Ступина Надя технологипе иртнĕ олимпиадăра 3-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарчĕ. «Самый классный классный» конкурсра 8 класс ертӳçи М. Колбасова 3-мĕш вырăна тухрĕ. Республика шайĕнче иртекен «Симĕс планета» конкурсра та пирĕн ачасем: С. Данилова, З. Вязова, С. Вязов, К. Петров – 2-3-мĕш вырăнсем çĕнсе илме пултарчĕç. Манăн хĕрĕм Таня та Атапай шкулĕнче вĕреннĕ чух физкультура урокĕсене питĕ кăмăллатчĕ. Халĕ иккĕмĕш çул ĕнтĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен училищинче вĕренет. Унăн вĕрентекенĕ Иван Васильевич Воробьев паянхи кун та Атапай шкулĕнче ĕçлет. Ăна тав сăмахĕ калас килет. Нумаях пулмасть хĕрĕм Мускавра ухăпа перекенсен ăмăртăвне хутшăнчĕ. Пин-пин çĕртен пуçтарăннă спортсменсем хушшинче Атапай хĕрĕ пулни те çак шкула мăнаçлăх кӳмест-и вара? Вăл та çĕр улми пуçтармасăр ӳсмен.

**Раиса КУЛАКОВА.**

Сентимĕр ялĕ.

# «...Чунсене ан варалăр»

**2010 çулхи сентябрĕн 8-мĕшĕнче район хаçатĕнче «Кун пек те юрать-ши?» статья пичетленсе тухрĕ. Пирĕн те çыру авторĕнчен О. Тарасовран ыйтас килет: «Кун пек те юрать-ши?»**

Çĕр улми пухма тухни çинчен çырнине илсен килĕшмелле те пек. Анчах та çапла эпир пуртан мар, мăнтăртан та мар. Тата ĕç тени çынна нихăçан та пăсман.

Пысăк шкулăн, паллах, çăмăлрах. Аслă классенче вĕренекенсем тухсан та майлашаççĕ. Пирĕн те «иккĕмĕш çăкăра» яшкара курас килет. Тата кăçалхи йывăр вăхăта шута илсен çĕр улми пуссинче ĕçлени те пысăк çылăхах пулмасть пулĕ тесе шутлатпăр. Ĕçлеттермелле мар текен, çав вăхăтрах ял шкулĕсене хӳтĕлекен саккунсем кăларасчĕ – вара эпир те çĕр улми пуссине тухмасăрах пурăнаттăмăрччĕ.

Çырăва малалла вулатпăр. «Юриех çак шкулсен вĕрентӳ процесĕн çулталăк итогĕсене тишкерсе пăхрăм», – çырать О. Тарасов. Пирĕн чăвашсем кăна çапла пултараççĕ пуль. Вырăнлă критиклесен нимех те марччĕ.

2009-2010 вĕренӳ çулне илсен пирĕн вĕренекенсен 57 процентчĕ вĕренӳ çулне «4» тата «5» паллăсемпе вĕçлерĕ. Выпускниксем Мускава та вĕренме кĕчĕç: кăçал та, иртнĕ çул та. Кĕçĕн классем хушшинче иртterекен интеллектуаллă вăйăсенче те Ильинкăсен кăтартăвĕсем япăх мар: литература вулавĕ – 1-мĕш вырăн, чăваш чĕлхи – 3-мĕш вырăн, тăван литература вулавĕ – 3-мĕш вырăн; пĕлтĕр те чăваш чĕлхипе 3-мĕш вырăнта пулнă.

Олимпиадăсене хутшăннин виçĕ çулхи кăтартăвĕсене пăхсан та пирĕн ачасем юлашкисен ретĕнче мар: математика (11 класс) – 3-мĕш вырăн, вырăс литератури (11 класс) – 3-мĕш, физика (11 класс) – 3-мĕш, чăваш чĕлхи (10 класс) – 2-мĕш, хими (9 класс) – 3-мĕш, экономика (11 класс) – 3-мĕш. Раççей шайĕнче дистанци мелĕпе иртнĕ олимпиадăсенче (вырăс чĕлхипе литератури) – 1,2, 3 вырăнсем пур.

ППЭ (ЕГЭ) результачĕсем япăх тесе йышăнас килмест. Район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ З.Ю. Дипломатова педагогсен августри конференцийĕнче туса панă докладах илер. «Математикăна илсен Мăн Сĕнтĕр, Ильинка, Юнкă, Калайкасси, Нискасси шкулĕсенче, Муркаш лицейĕнче балсем республикăри вăтам кăтартусенчен те çӳллĕрех», – терĕ вăл кăтартусене тишкернĕ май.

Шкулсем хушшинчи рейтинга тишкерсен эпир математикăпа 4-мĕш, Москакасси шкулĕ – 7-мĕш. (Турă каçартăр та пире, пирĕн Москакассисене пĕртте хурлас килмест. Ăна тума ятарлă органсем те çителĕклĕ). Анчах та ытла кӳренмелле пулса тухать-çке О. Тарасов çырнинчен.

Вырăс чĕлхине илсен эпир çак рейтингра 9-мĕш, Москакассисем 8-мĕш. Юнашарах тата.

Патшалăх муниципаллă аттестацине мĕнле тытнăши? Вырăс чĕлхипе: Москакасси шкулĕ – 3,6 (вăтам кăтарту), Ильинка шкулĕ – 3,4 (вăтам кăтарту); математикăпа: Москакасси – 3,19, Ильинка – 3,1; тăван чĕлхе – Москакасси – 3,6, Ильинка – 3,9.

Цифрăсем хăйсемех калаççĕ: Ильинкăсем пĕртте кая мар. Кая пулма çуралман та эпир ку тĕнчене.

Çавăнпа та калас килет: «Шурă хута хуратма пулать, анчах чунсене ан варалăр. Çиччĕ виç те пĕрре кас. Чăваш чăвашлах пултăрччĕ».

**Ильинкăри вăтам шкул коллективĕ.**

Блиц-интервью

# Яваплăх çитмест

***Çулталăк пуçланнăранпа 8 уйăх сисĕнмесĕрех хыçа юлчĕ. Çак тапхăрта районти çул çитмен çамрăксем йĕрке тĕлĕшĕнчен хăйсене мĕнлерех кăтартрĕç-ха? Ыйту çине хурав илес тесе районти шалти ĕçсен пайĕн çул çитменнисемпе ĕçлекен инспекцийĕн инспекторĕпе Н.М. ПУШКИНĂПА тĕл пултăмăр.***

– Çак тапхăрта çул çитменнисем пирĕн районта 5 преступлени турĕç. Ку пĕлтĕрхипе танлаштарсан пĕчĕк цифра пулин те пирĕн ĕçе пĕрре те лăпкăлăх кӳмест. Йĕркене пăсакансем 14-17 çулхи 5 çамрăк. Çул çитменнисем хутшăннă преступленисенчен иккĕшне ушкăнпа – аслисемпе пĕрле – тунă, пĕрне – ӳсĕрле. Çакă çамрăксен кăна мар, аслисен те яваплăхĕ çуккине кăтартса парать. Çул çитменнисене йĕрке пăсма явăçтарни ырă пулăм тесе шутлаççĕши вĕсем? Çавăнпа та «хальхи çамрăксем» каларăша малалла тăсса калаçнă чух хăшĕ-пĕрин хăйĕн çине те тимлĕн пăхмалла.

Районти шалти ĕçсен пайĕнче августăн 31-мĕшĕ тĕлне çул çитмен 46 çамрăк учетра тăрать, вĕсенчен 20-шĕ – шкулта вĕренекенсем. Йĕркене пăсакан ачасенчен ытларахăшĕ тулли мар, сахал тупăшлă тата йывăр лару-тăруллă çемьесенчен пулнине шута илсен, çакнашкал 18 çемье те пирĕн патра учетра.

Паллах, пирĕн ĕçре административлă протоколсем çырмасăр пулмасть. Саккунпа килĕшӳллĕн асăннă тапхăрта хамăр ĕç енĕпе 168 протокол çырма тиврĕ. Вăл хушăра çул çитменнисем обществăлла вырăнсенче ӳсĕр пулнăшăн, çакнашкал вырăнсенче алкоголь пур шĕвек ĕçнĕшĕн, аслисем çул çитменнисене эрех-сăра ĕçме явăçтарнăшăн тата ытти те.

Ашшĕ-амăшĕсем пирки вара уйрăммăн та калас килет. Çул çитмен ачисене тивĕçлĕ воспитани паманшăн тĕрĕслевсем вăхăтĕнче 85 протокол çыртăмăр. Çакă ашшĕамăшĕ ачисем çинчен манса кайсах эрех-сăра авăрне путнăшăн пулса тухать. Апла вĕсен енчен нимĕнле тимлĕх, яваплăх та çук, «кăтартăвĕсем» вара çул çитменнисем йĕрке пăснинче те палăрăмлă.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Результаты аукциона**

03 августа 2010 года состоялся открытый аукцион, проводимый администрацией Моргаушского района по месту её нахождения, на право заключения договора купли-продажи муниципального имущества Моргаушского района, подлежащего приватизации в 2010 году, с одновременной приватизацией земельного участка, на котором оно расположено: двухэтажное кирпичное здание, расположенное по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Большой Сундырь, ул. Советская д.15, общей площадью 873,8 кв.м инвентарный № БТИ 11316 (Лит.А) и земельный участок с кадастровым номером 21:17:060401:298 из категории земли населенных пунктов, разрешенное использование: для содержания и обслуживания зданий и сооружений, общей площадью 6006 кв.м. Подано 2 заявки от участников аукциона: ООО «СМУ-58» и ООО «СМУ-59» Победителем аукциона признано Общество с ограниченной ответственностью «СМУ-58».Цена сделки - 1004188,5 (один миллион четыре тысячи сто восемьдесят восемь) рублей 50 копеек.

12 августа 2010 года состоялся открытый аукцион, проводимый администрацией Моргаушского района по месту её нахождения, на право заключения договора купли-продажи муниципального имущества Моргаушского района, подлежащего приватизации в 2010 году, с одновременной приватизацией земельного участка на котором оно расположено: одноэтажное бревенчатое здание (Лит. А) с кирпичным пристроем (Лит. А1) и кирпичной верандой (Лит.а1), расположенное по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с. Моргауши, ул.Чапаева, дом 64, общей площадью–164,7 кв.м., инвентарный номер БТИ – 2579, гараж (Лит.Г1), расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с. Моргауши, ул. Чапаева, дом 64а, общей площадью – 86,0 кв.м., инвентарный номер БТИ – 2578, земельный участок, занятый указанными объектами недвижимости и необходимый для их содержания и обслуживания, с кадастровым номером 21:17:160306:132, площадью 704 кв.м., расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с. Моргауши, ул. Чапаева, дом 64 из категории «земли населенных пунктов». Подано 2 заявки от участников аукциона: «Моргауши-Хлеб» и Моргаушское районное потребительское общество. Победителем признано Моргаушское районное потребительское общество. Цена сделки - 297770 (двести девяносто семь тысяч семьсот семьдесят) рублей.

## Пĕлтерӳсем. Объявления


**17 сентября с 8-00 до 16-00 часов Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу обуви из натуральной кожи Ульяновской, Беларусской фабрик и других российских производителей. 5-5.**

Администрация МУП ЖКХ «Моргаушское» предупреждает, что с 15 сентября 2010 года проводится заполнение и опрессовка системы отопления. Просим вас проверить и закрыть все запорные краны на отопительных приборах. По всем вопросам обращаться по тел.: 62-6-37, 62-3-74, 62-3-98.

**Керамзитобетонные блоки, щебень гранитный, известковый, керамзит, гравмасса, песок речной, торф. Доставка. Тел.: 8-906-383-65-13, 8-903-389-98-62. 3-8.**

* * *

**Ремонтная мастерская «РЕМОНТНИК», открывшаяся в здании «Агропромснаба», оказывает услуги по ремонту бытовых приборов, часов и электрооборудования, по установке сантехники, водяных счетчиков и водонагревателей. С. Моргауши, ул. 50 лет Октября, 25. Тел.:(8352)67-30-10. 3-3.**

* * *

**Çĕнĕ çуртри пĕр пӳлĕмлĕ хваттер туянатăп. Тел.: 8-965-683-25-46.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 3-5.**

* * *

**СХПК ПЗ им. Е.Андреева закупает от населения живой скот (нетели), в т.ч. коров 1-2 отела. Цена договорная. Продаем: пасеку, здание конюшни и ферму д. Малиновка; здание конюшни и здание мельницы д. Шептаки; здание мельницы д. Сюрлатри; теплицу площадью 561 кв.м. в с. Моргауши. Адрес: с. Моргауши, ул. Кр. Площадь, д. 10.**

**Тел.: 8-927-669-02-14, 62-1-97, 8-927-849-29-83.**

**СПУТНИК. АНТЕННЫ «ТРИКОЛОР» комплект – 7400р.: рефлектор (тарелка) в сборе; ресивер GS 8300м (записывает); кабель 20 метров + крепеж; регистрация, гарантия; инструктаж по установке. Тел.: 8-906-385-29-30.**








Моргаушская районная организация профсоюза работников культуры выражает глубокое соболезнование заместителю главы администрации района – начальнику отдела культуры и архивного дела Андреевой А.Е. в связи с безвременной кончиной сестры
**ВАЛЕНТИНЫ.**

СХПК «Передовик» искренне скорбит и выражает глубокое соболезнование родным и близким по поводу безвременной кончины бухгалтера
**АНЕКШЕВОЙ**
**Елены Николаевны**


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:

Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.

ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редакторшăн В.Л. ШАПОШНИКОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.

Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.

Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 14.09.2010 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4017.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.